**А.И.ИВАНОВ**

# ÇАМРĂКСЕМШĔН – ЫРĂ ТĔСЛĔХ

## *Н.И.Ашмарин çинчен аса илни*

***А.И.Иванов – паллă чăваш чĕлхеçи, çутĕçпе ăслăлăх ĕçне нумай вăй хунă çын. Хăй вăхăтĕнче вăл Н.И.Ашмаринпа тачă çыхăнса ĕçленĕ. Кунта пичетленекен асаилĕвĕн вырăсла тексчĕ 1971 çулта «Н.И.Ашмарин – чăваш чĕлхе пĕлĕвĕн никĕсне хываканĕ» /»Н.И.Ашмарин – основоположник Чувашского языкознания»/ сборникра пичетленсе тухнă.***

НИКОЛАЙ Иванович Ашмарина эпĕ пуçласа 1920 çулта Хусанта курсаччĕ. Вăл пире, чăвашсем хушшинчи вĕренӳ ĕçĕн Пĕтĕм Раççейри съездне пухăннă çынсене, чăваш чĕлхи çинчен темиçе лекци вуласа панăччĕ. Тепĕр темиçе кунтан вара мана унпа çывăхрах паллашма тӳр килчĕ. РСФСР Çутĕç Халăх Комиссариачĕн Вак халăхсен пайĕнчи Чăваш секцийĕн ертӳçи Ф.Н.Сергеев мана Николай Ивановича Хусантан Чĕмпĕре куçса каймашкăн пулăшма ыйтрĕ /эпĕ Чĕмпĕр кĕпĕрне çутĕç пайĕн чăваш секцийĕн инструкторĕнче ĕçлеттĕм/. Ун чухне Ашмарина Чĕмпĕрти Чăваш халăх çутĕç институтне чăваш чĕлхи вĕрентме чĕнсе илнĕ пулнă. Килĕнчи япаласене пăрахутпа Чĕмпĕре ăсатма мĕн кирлине туянтăм та эпĕ Ашмарин хваттерне кайрăм. Темиçе кун хушшинче сĕтел-пукана, кĕнекесене, савăт-сапана чĕркесе-çыхса хатĕрлерĕм, пристане леçсе Чĕмпĕре яма пăрахут çине тиеттертĕм, докуменчĕсене Н.И.Ашмарина патăм.




Н.И.Ашмарин хăйĕн кил-йышĕпе пĕр хутлă йывăç çуртра пурăнатчĕ. Хваттерĕ пысăк марччĕ, темех чаплă япаласем çукчĕ унта. Тӳрех курăнатчĕ: кунта харпăр хăтлăхĕшĕн, ырлăх-рехетшĕн тăрăшакан çын мар, пуçĕпех тĕпчев ĕçне путнă ăсчах пурăнать.

Чĕмпĕрте те Николай Иванович питĕ сăпайлă пурăннă. Пĕр хутлă йывăç çуртрах пысăк мар хваттер йышăнатчĕ унăн кил-йышĕ. Чăваш автономи облаçĕн ĕç тăвакан комитечĕ, Ашмарин Чăваш халăх çутĕç институтĕнче ĕçлесе пурăнма пултартăр тесе, ăна пулăшма тăрăшатчĕ. Çапла, ун кил-йышне ĕне туянса пачĕç, Шупашкартан тырă-çăнăх кӳрсе килетчĕç.

1920-21 çулсенче эпĕ Николай Ивановичпа пĕрле «Атăл юрри» журнал редколлегийĕнче ĕçлерĕм. Унта унăн «Çĕнĕ сăмахсем» ятлă статйи пичетленсе тухнăччĕ. Нихçан та манассăм çук: кашни тĕл пулмассерен вăл мана çине-çинех ыйту парса тĕпчетчĕ. Эпир унпа Чăваш институчĕн килкартинче час-часах уткаласа çӳреттĕмĕр. Николай Иванович шав чăваш чĕлхин уйрăм пулăмĕсем çинчен ыйтусем паратчĕ. «Çак-çак ăнлава сирĕн енче мĕнле сăмахпа калаççĕ?« «Çак-çак сăмах сирĕн патра мĕне пĕлтерет?« «Сăмахăн ку форми мĕн пĕлтерĕшлĕ?« «Сăмахăн çак формипе сирĕн хăçан-хăçан усă кураççĕ?« Вĕçĕ çукчĕ çавнашкал ыйтусен. Çапла майпа Ашмарин /ку е вăл сăмахăн пĕлтерĕшне пĕлсе çитме, ку е вăл грамматика формин функцине палăртма тăрăшнă, паллах. Эпĕ каланинче ăна кирли пулсан, ăна çавăнтах хăйĕн блокнотне çырса хуратчĕ.

Паллă ĕнтĕ, Н.И.Ашмарин хăйĕн словарĕ валли питĕ пуян материал пухнă. Халăх пуплевĕнчен илнĕ кашни сăмаха, кашни пуплерĕш тĕслĕхне пахалатчĕ вăл. Словаре калăпласа пичетлеме хатĕрленĕ май унăн калăпăшне чакарас ыйту тухса тăчĕ. Ăна чи малтан революциччен тухнă тĕн кĕнекисенчен илнĕ тĕслĕхсене катертме сĕнчĕç. Вара Ашмарин Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Советне çыру ячĕ, словарьти кашни тĕслĕх сăмахсен тĕрлĕ пĕлтерĕшĕсемпе уйрăмлăхĕсене уçса пама кирлине ĕнентерме тăрăшрĕ, вĕсене словарьтех хăварма ӳкĕтлерĕ. Анчах пуплев тĕслĕхĕсем çав тери нумайччĕ, çавăнпа та вĕсен шутне словарь пахалăхне ӳкермесĕрех чакарма май килчĕ.

Хĕрĕхĕмĕш çулсен вĕçĕнче, словаре пичетлесе кăларас ĕç вĕçленсе пынă чухне, унăн пĕтĕмлетӳллĕ вĕççăмахне çырса хатĕрлес ыйту тухса тăчĕ. Çавна май эпĕ унччен тухнă 16 кăларăмри тата 17-мĕш кăларăм алçырăвĕнчи сăмахсене шутласа тухрăм. Пурĕ 40 пине яхăн тĕп сăмах тата 5-6 пин вариант тухрĕ. Çапла ĕнтĕ, словарьти сăмахсен хисепĕ 45 пине капашать пулмалла.

30-мĕш çулсен пуçламăшĕнче пирĕн республика Наркомпросĕ çумĕнчи академи центрĕн ăслăлăх секретарĕ П.И.Иванов Н.И.Ашмаринăн грамматика ĕçĕсене пĕтĕмĕшпех хурласа çырнăччĕ. Паллах, сăмахран, 1898 çултанпа «Материалсенче» хăш-пĕр çитменлĕхсем пулни палăрнах ĕнтĕ. Анчах, тĕпрен илсен, ку критика пачах та тĕрĕс пулман. Çакă Н.И.Ашмарина хытă пăшăрхантаратчĕ. Пирĕн тепĕр сумлă чĕлхеçĕ Ф.Т.Тимофеев хăйĕн чăваш грамматикин тавлашуллă ыйтăвĕсемпе çырнă кĕнекинче Ашмарин шухăшĕсене ĕненмелле хӳтĕлерĕ. Çавăн хыççăн тин Николай Иванович лăпланнă пек пулчĕ. Çакна та асăнмалла: Ашмарин ĕçĕсене хытă тиркенĕ тепĕр çын, Н.Я.Золотов, хăй вилес умĕн çапла çырса хăварнă: вăл Ашмарина кăлăхах тапăннă, унăн чăваш халăхĕ умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçĕсене тивĕçлĕ хак парайман.

Н.И.Ашмаринăн ĕçне-хĕлне - унăн çав тери анлă талккăшĕпе пахалăхне, ăслăлăхпа çутĕçĕнчи пĕлтерĕшне хак панă чухне çакна та манма юрамасть: вĕсен пысăкрах пайне Николай Иванович Хусанти учитель семинарийĕнче ĕçленĕ тапхăрта çырнă. Урăхла каласан, ăслăлăх ĕçĕшĕн шалу та илмен, урăх пулăшу-çăмăллăх та курман. Тĕнчипе паллă тюрколог В.В.Радлов çакна тивĕçлипех палăртнă. Хусан университечĕн профессорĕ В.А.Богородицкий патне 1916 çулта янă çырура вăл, Н.И.Ашмаринăн семинарири ĕç вырăнĕ ăслăлăх тĕпчевĕсене ăнăçлă туса пыма май паманнине кăтартса, ăна чăваш тата тутар чĕлхисене вĕрентмешкĕн куçарма, çак тĕллевпе университетра тивĕçлĕ кафедра уçма сĕннĕ. Ку сĕнӳ вăхăтра пурнăçланнă пулсан, паллах, Ашмарин чăваш чĕлхе пĕлĕвне паха тĕпчев ĕçĕсем тата нумайрах панă пулĕччĕ.

Николай Иванович Ашмарин тĕлĕнмелле сăпайлă та ĕçчен çын, пысăк пĕлӳллĕ те анлă тавра курăмлă тĕпчевçĕ пулнă. Вăл чăваш чĕлхине çав тери лайăх пĕлетчĕ, ăна тишкерме хăйĕн пĕтĕм çивĕч ăс-хакăлне, вичкĕн туйăмлăхне паратчĕ. Пĕр ыра тĕллевпе пурăнса иртрĕ вăл хăйĕн пурнăçне, чăваш чĕлхипе историйĕ тĕпчевçисен çĕнĕ ăрăвĕсем валли пуян еткер тата пархатарлă халалсем хăварчĕ.

**Анатолий СМОЛИН**

***Н.И.АШМАРИНА***

**Чăваш-и вăл е чăваш мар-и,**
**Нумай ĕçленĕ-и, сахал-и?**
**Пурне те паллă халь – Ашмарин**
**Чăваш сăмахĕн шурсухалĕ.**
**Сăмахсене шитпе виçеймĕн,**
**Калаймăн: «Пăт туртать е тонна...»**
**Кунта йăлт урăхла виçе-мĕн:**
**Пĕр кĕнеке – вунçичĕ томлă.**
**Кашни сăмах, сăмах кăшкарĕ**
**Ун сывлăхне самай кăшларĕ.**
**Чăваш-и вăл е чăваш мар-и**
**– Чăвашшăн тăрăшрĕ Ашмарин.**